ЛКЧ К84.89(=Чув)
Г68
И-113372

Денис
Гордеев

Ăшă çумăр

Национальная библиотека ЧР
4-043372

4-43372
ТЕКА

Василий Иванович
ЧКЧ К84.89 (=Чув)
Чебоксары, Чув. кн. изд-во
Детиздат
26/II-76

Ăшă çумăр

Çумăр, çумăр,
Ăшă çумăр!
Ăш тумламлăскер,
Килех!
Çуртсем çумĕн
Эпир пурте
Халь васкатпăр
Килелле.

Çумăр, çумăр,
Ăшă çумăр!
Шӳтеретĕн
Чĕресрен.
Йĕпенет пулин те
Тумăм —
Чупса тухрăм
Хӳтлĕхрен.

Мăшăр шăнкăрч

Икĕ шăнкăрч килсе ларчĕç
Пирĕн пӳрт çине.
Савăнса çеç юрра ячĕç,
Çапрĕç çунатне.
Йышăнаççĕ, вырнаçаççĕ
Сĕнĕ йăвана.
Шăхăраççĕ, йыхăраççĕ
Урама мана.

Юрласа-ши кăтартасшăн
Аякри çинчен?
Тен, пире салам каласшăн
Кăнтăр çĕрĕнчен?

Юнтармăш

Çар хĕвел ачасене
Ăшшăн-ăшшăн илĕртет.
Урама çерем çине
Вылямашкăн килĕр, тет.

Ак Антун çерем çинче,
Унăн теттесем нумай.
— Манăн! — кăшкăрать çинçен
Каласса выляна май.

Ыйт унран: — Лаша парсам
Вылямашкăн кăштлăха.

— Çĕмрĕк урапу пур сан, —
Тет, ямасть вăл çывăха.

— Эп вылям-и упупа?
Халлĕхе пӳртсем эс ту.
— Манăн! Хам выляп унпа! —
Кăшкăрать каллех Антун.

— Эй, вылятăр пĕчченех, —
Терĕç пурте ачасем.

Антун ларчĕ темчченех,
Йăлăхтарчĕç теттесем.

— Кил выляр! — чĕнет мана.
Эпĕ ал сулап кăна.
Явăçасчĕ ушкăна —
Унран пурте пăрăнать.

Макăрса ярать Антун,
Куççульпе питне çăвать.
— Ӳлĕмрен апла ан ту, —
Амăш вĕрентсе калать.

Тук, тук, тук!
Тук, тук, тук!
Иртенпех шаккать Петюк.
Каскалать те çапкалать —
Çĕнĕ пӳрт ӳссе ларать.

Петюк

Тук, тук, тук!
Тук, тук, тук!
Туклатать çеç мăлатук.
Ĕшенмесĕр ăсталать,
Çĕн гараж кунта пулать.

Тук, тук, тук!
Тук, тук, тук!

Тăрмашать каллех Петюк.
Тук, тук, тук!
Пӳрнене
Çатлаттарчӗ мăлатук.

«У-у-у!—йӗрет Петюк:—
Ма усал эс, мăлатук...»
Туклатмасть халь мăлатук,
Туклатмашкăн кăмăл çук:

„Эс мана тытма вӗрен,
Кун пек пулмӗ ӳлӗмрен!..“
Тук, тук, тук!
Тук, тук, тук!
Ӗç пуçлать каллех Петюк.

Суя паттăр

— Петюксен йытти усал,
Хуп-хура та çăмламас.
Урампа пырап утса —
Сикрĕ тухрĕ ман ума.

Хăрамарăм. Юнаса
Хыттăн кăшкăртăм. Унтан...
— Чăнласах-и?
— Чăнласах.
— Тармалла эпир пулсан.

— Эп тармарăм. Хӳринчен
Ярса илтĕм те тăрук
Кăшкăртрăм вара темччен.
— Тыттармастăн-и?
— Çук, çук.

— Эсĕ мар-и пĕркунне
Хытă тарнăччĕ хуртан?
—Хӳрине тытма унне
Майлă мар. Тата унтан...

Çĕнĕ велосипед

— Анне, анне, эп ĕнер
Пальтона вараламан.
Сантăр йăмăкне хĕнет,
Элĕ Сантăр пек туман.

— Анне, Уçăп пиччене
Виртлеместĕп чĕлхепе.
Çинĕ чух кĕпе умне
Йĕпетместĕп, йăмăк пек.

— Чечек тесе вĕлтĕрен
Тыттармастăп Тольăна.
Хăйăрпа сапса питрен
Халь йĕртместĕп эп ăна.

— Анне, çĕн велосипед
Илсе панă Колькăна.
Халех илмесен пĕтет..
Атя, каяр лавккана.

Пăравус

Пукан çумне пукан —
Ку ĕнтĕ пăравус.
Петюк — руль тытакан.
Асту, пуçна ан ус!

Хаваслă машинист,
Пăхать инçе-инçе.
Ванюш, мĕскершĕн эс
Йĕретĕн айккинче?

Йĕме сăлтав çук мар.
Руль тивĕçмест ăна.

Калать вăл Петюка:
— Вылясшăн ху кăна...

Ванюш халь руль тытать.
Асту, пуçна ан ус!
Епле, ав, ыткăнать
Хăватлă пăравус!

— Ванюш, çитет-тĕр. Чар,
Часрах ан, эп ларам.
Ванюш анасшăн мар,
Петюк тĕртсе ярать.

Йĕреççĕ иккĕн тан.
Çимун пичче кулать:
— Татах тӳнтер пукан —
Ик пăравус пулать...

Марине теттисем

Хушка пуç кушак, путек,
Сар кĕпеллĕ пукане —
Харăс темиçе тетте
Хучĕ вăл сĕтел çине.

Итлемеççĕ теттесем.
Кушак ӳкрĕ урайне.
— Эп сана, Măр-măр!.. — тесе,
Вăрçса илчĕ Марине.

Пукане çыхасшăн мар
Сар çеçкеллĕ тутăрне.
— Пултаратăн вĕт шăнма,—
Ӳкĕтлерĕ теттине.

Упине, çăмламасне,
Ташлама хушать вĕçрен.
Леш силлет вара пуçне
Пружинсем пушаниччен.

Попугай, кăвак сăмса,
Аптратать ялан ăна.
Ни тăмасть вăл çакăнса,
Йăванма пĕлет кăна.

— Лар кунта! — пукан çине
Хучĕ вăрăм сăмсана.
Попугай теттесене
Тӳнтерет. Персе анать.

— Ан пăс эс хитре вăййа, —
Терĕ йăмăк вĕрентсе.
Ашкăнчăк попугая
Тăратать вăл кĕтесе.

Маринепе амăшĕ

— Йăлăхтарчĕç! — тĕртсе ячĕ
Марине теттисене.

Амăш тĕпелте ларатчĕ,
Хĕрĕ пычĕ ун патне.

— Мĕн тăван?
— Чăлха çыхатăп,
Сан валли вăл, ăшăскер.

— Кӳр-ха, эп çыхса пăхатăп,
Кӳр-ха, кӳр, —тет пĕчĕкскер.

— Пултарайăн-ши эс? Темĕн...
Пуçтарах теттӳсене.
Амăшне итленĕçемĕн
Пуçне чикрĕ Марине.

Пĕчĕкскер тĕрлесшĕн тĕрĕ,
Вĕренесшĕн вăл çыхма.
Пултарать те пулĕ хĕрĕ,
Амăш çеç хăрать шанма.

Пулăра

Ĕненместĕр-и? Хам куртăм —
Уйăх ӳкнĕ Кĕтнене.
Çăткăн чĕрчунсем те пур-тăр—
Çыртса илнĕ çуррине.

Аттене калатăп: „Уйăх...
Уйăх юнĕ шыв çинче".
— Ан шавла! — юнать вăл, — çуйăн
Вăлтĕ каç тĕттĕмĕнче.

Аттене тĕртетĕп: „Сулă,
Ай, таптать ав, уйăха..."
Малалла мĕн пулчĕ пулĕ?
Çĕнеймерĕм ыйăха.

Амăш юмахĕ

Шавлама пăрахрĕ Сантăр,
Ларас терĕ шăпăртах:
Ват аслашшĕ лăпкăн кантăр—
Тĕлĕресшĕн вăл пăртак.

Шăплăх йăлăхтарчĕ хăвăрт.
Мĕн туса йăпанмалла?
Мультфильмсем курмашкăн вăхăт
Çитеймен — тăхтамалла.

Ларчĕ-ларчĕ те вăл тупрĕ
Йăпанмалăх ĕç тинех.
Виçĕ хут та уççа тухрĕ
Юмахсен кĕнекине.

Вулама пĕлмест-ха Сантăр,
Саспалли кăна паллать.
Вулаймарĕ, тем тусан та,
Кĕнеке ятне çаплах.

Систермесĕр çеç, вăраххăн
Пычĕ амăш ун патне:
— Хăш юмахĕ лайăхрах-ха?
— Эç калаканни, анне.



Ракета

Ӳплештернĕ ик витре,
Айлă-çийлĕ хунă.
Ку ракета. Пĕкĕрен
Унăн рульне тунă.

Чупкалаççĕ тавралла
Иккĕн-виççĕн харăс.
Кĕç ракета каймалла:
Пурте хăвăрт ларчĕç.

Çĕкленмешкĕн, кăшкăрса,
Коля ирĕк пачĕ.
Ачасем, ав, хăраса
Халĕ куç хупаççĕ.

Ӳсчĕр-ха айванскерсем,
Космоса çĕкленĕç.
Халĕ куç хупакансем
Ун чухне шикленмĕç.

Выртмара

Йĕри-тавра ват чăрăшсем
Хурал тăраççĕ.
Кăвайт çунса вăйланнăçем
Куççем шараççĕ.

Пăхăр çĕленĕн явăнса
Хĕлхем çĕкленчĕ.
Йывăç вуллийĕсем сап-сар
Тĕспе пĕркенчĕç.

И-43372

Национальная библиотека
Чувашской Республики

Çӳлтен çут çăлтăр ӳкнĕнех
Кăвайт шартлатрĕ.
Хăй вĕçсĕр юмахне тинех
Ватти тапратрĕ.

„Кăвак утпа Эсрел çиçсе
Куçран çухалчĕ...“
Кĕç вăрмантан тискер сиксе
Вăл тухаслах-çке.

Ах, асатте, çитет! Пӳлсе
Чаратпăр. Çитĕ!
Çара аллăмăрсем кӳтсе
Пăрланчĕç ĕнтĕ.

Лаша вĕт курăк чĕпĕтсе
Çини те халĕ —
Сас тунăнах çилпе вĕçсе
Эсрел сухалĕ.

Ах, асатте, çитет! Часрах
Киле каясчĕ.
Хĕвел шевлийĕ тухăçра
Çиçсе саралчĕ.

Вăйă

— Асанне, чей пĕçерет,
Кайран йăмăк ĕçтĕрех.
Эп тухам-и урама?
Петюк чĕнчĕ выляма.

— Тухма тухăн та вара...
Сăмсуна ан ваттарах.

Эпĕ сикрĕм картлаçран,
Улайкка та — ман хыçран.
Шăлтăр-шăлтăр урапа
Вăл та чупрĕ урама.

Каярах юлнă иккен —
Выляма мана кĕтмен.
Çул çине, тусан çине,
Купаланнă ачасем.
Тĕрткелеççĕ пĕр-пĕрне,
Ха-ха-ха! кулаç хăйсем.

Эп те пытăм. Яшт! сиксе
Ӳкрĕм лап! тĕшĕрĕлсе.
Улай çыртрĕ, сĕтĕрет,
Такам хытă хĕстерет.
Алсене пăркăчласа
Тахăшĕ хурать пăрса.

Шăтăр-шатăр, шăр та шар
Çурăлать ман шăлавар.

Çитĕ! Кăшт канса илер,
Каннă хыççăн пикенер.
Васкамасăр çĕкленетпĕр,
Пурте хытă тĕлĕнетпĕр.

Ак тăрăть кăтра Якур,
Унăн лайăх мечек пур.
Тусан тулнă çăварне.
Сунаслать сине-синех.

Ак Сашук, ачаш Сашук,
Ун йĕмен сехет те çук,
Ыраттарнă урине,
Юхтарать халь куççульне.

Эп тăратăп айккинче,
Тусан çеç тумтир çинче.
Эй, Улайăм, мĕскĕнскер,
Эс те хавас мар темскер...

— Мĕн тăватăр, тусăмсем?
— Вăй вылятпăр-ха, пиччем.

—Эй-эй-эй! Капла мĕнле...
Кам вылятăр сирĕнле?
Выляма та пĕлмелле.
Атьăр, пухăнар пĕрле.

Алла-аллăн тытăнса
Çаврăнар-ха юрласа.
Юррине те, ак, тупатпăр,
Атьăр, ушкăнпа пуçлатпăр.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тваттă,
Ункăра эпир тăратпăр.
Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тваттă,
Юрласа эпир утатпăр.

Юрласа эпир утатпăр,
Ал çупать кăна пичче, —
Юрламашкăн чарăнатпăр.
Кам-ха ункă варринче?

Э, Петюк! Эс халь шыратăн,
Кам пытарнă кăранташ?
Тупрăн-тăк, пырса çапатăн,
Ху таратăн вăш та ваш.

Ак Петюк чупать, чупать,
Ывăнсан, унка тăрать.
Ункăран тухать Якур,
Вăл та ыткăнать правур.

Аллине çĕклет пиччемĕр:
— Алла-аллăн тытăнар.
Ушкăнпа çаврăннăçемĕн
Çĕнĕ юрăсем юрлар.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тваттă,
Ушкăнра эпир утатпăр.
Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тваттă.
Савăнса эпир вылятпăр.

Чакак хыпарĕ

Ват Чана тин çеç вăраннă,
Çитерет чĕпписене.
Шур аяк вĕçсе те аннă
Чанасен йăви умне.

— Чана чунăм, Чана чунăм!
Чăн-чăнах, чăнах, чăнах!
Эп суйсассăн, шăнтăр юнăм,
Тин çеç куртăм, тин кăна.

Йĕплемес Чĕрĕп, шутла-ха,
Ӳстерсе янă хӳре.
Хутаç çакнă, тытнă лакăм,
Йывăç тăрринче çӳрет...

— Вăт, хыпар пĕлтертĕн, хĕрĕм,
Тĕлĕнтертĕн, ай-ай-ай!
Ват Курак патне те кĕр эс,
Каласа кăтарт çул май.

Ват Курак патне вăл кĕчĕ,
Çапла ыйтнăччĕ Чана.
— Эс, Курак мучиçĕм, пĕлччĕ,
Йĕплемес мĕн хăтланать?..

— Кранк! Кранк! Ара, ара,
Çут тĕнчемĕр мĕн курать?
— Ай-ай, — тĕлĕнсе тӳнетĕп,—
Кун пекки хальччен пулман.

Улатакка пиччӳне те
Каласа кăтарт çул май.

Улатакка, ĕçченскер,
Вăл тăватчĕ чăрессем.
— Эй, пиччемçĕм, эс мĕскер
Ĕç пуçланă ирлесе?

Эс илтмен-и-ха, пиччем,
Йĕплемес мĕн хăтланать?
Вăрманта халь ун çинчен
Пĕтĕм кайăк калаçать.

Чĕрĕп çемйи-мĕнĕпех
Куçнă йывăç тăррине.
Кĕрĕкĕ тилĕнни пек,
Сыпса тăснă хŭрине.

Пĕчĕк çурисем тата?
Каласан, пит хĕрелет.
Йĕкелсем тата-тата
Тек переççĕ çĕрелле.

* * *

Çар хĕвел чăл-пар салатрĕ
Йăлăхтарнă сулхăна.
Чĕрчунсем шавла пуçларĕç,
Пухăнчĕç пĕр вырăна.

Утамас мăнаçлăн ларнă
Çŭллĕ тунката çине.
Унăн çывăхне кăкарнă
Чĕрĕппе çурисене.

— Йĕппŭ пур-и? Хăвăнах-и?
Çăмламас хŭрŭ ăçта? —
Кашаман тĕпчет: —Чăнах-и,
Сикнелетĕн ир хута?

— Йĕппĕмсем-и? Ак, куратăр.
Нихăçан хŭрем пулман.

Чĕппĕмсем те ман пĕр утăм
Хам çумран ниçта хăпман.

Аптăрарĕ Утамас та,
Пуç чиксе кăна ларать:
— Йĕплĕ кĕрĕкпех, суймастăп,
Вăл çӳретчĕ кăмпара...

— Кам вара хӳре ӳстернĕ,
Кам вара ирпе ирех
Çăпка пĕкĕчи сиктернĕн
Йывăç силлесе çӳрет?

— Эп çӳретĕп, эп çӳретĕп,
Йывăç тăрринче эп шав.
Çăмламас хитре хӳрем те.
Эпĕ! Эпĕ вăл — пакша!

— Ай-ай-ай! — Вăрман янрарĕ,—
Чакак суйнă-çке пире!
— Тупăр суеçе! Ан ярăр!
Тĕк вĕçтерĕпĕр пĕрре.

Туратсем çине парлатрĕ,
Чакак хăтăлчĕ аран.
— Суяс мар текех,—шутларĕ,—
Ыр кураймăн суяран...

Кĕç янратрĕ вăрмана:
— Чăн-чăнах, чăнах, чăнах!..

250

Тупмалли

Ăшă çумăр 1
Măшăр шăнкăрч . . 2
Юнтармăш 2
Петюк 4
Суя паттăр 6
Çĕнĕ велосипед . . 6
Пăравус 7
Марине теттисем . . 8
Маринепе амăшĕ . . 10
Пулăра 12
Амăш юмахĕ . . . 13
Ракета 14
Выртмара 16
Вăйă 19
Чакак хыпарĕ . . . 24

С(чув)2
Горд. 68

Для детей дошкольного возраста

Гордеев Денис Викторович
ТЕПЛЫЙ ДОЖДИК

Редактор Р. Б. Бородкина
Художник В. Агеев
Художественный редактор А. А. Афиногенов
Технический редактор А. Ф. Никитина
Корректор Н. В. Васильева

Сдано в набор 13/XI-1974 г.
Подписано к печати 18/VIII-1975 г.
Формат 70×90/16. Бумага офсетная № 1.
Физ. п. л. 2. Усл. п. л. 2,34. Уч.-изд. л. 2,1.
Заказ № 3195. Тираж 15000 экз. Цена 15 коп.

Чувашское книжное издательство.
Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР.
Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

Г 0761—0160 / М156(03)—75 118—75

©Чувашское книжное